***Карпова Наталия Степановна***

канд. пед. наук, доцент

Стерлитамакский филиал ФГБОУ ВО «Башкирский государственный университет»

г. Стерлитамак, Республика Башкортостан

# ОБРАЗЫ ПТИЦ И ЖИВОТНЫХ В СВАДЕБНЫХ ПЕСНЯХ ЧУВАШЕЙ РЕСПУБЛИКИ БАШКОРТОСТАН

***Аннотация***: *статья посвящена анализу образов птиц и животных, встречающихся в песнях свадебной обрядности чувашей Республики Башкортостан. Автор приходит к выводу о том, что образы птиц и животных имеют символическое значение в чувашских свадебных песнях. Наиболее часто встречаются образы гуся и утки, лебедя, а из животных – лошади (коня).*

***Ключевые слова***: *чувашские свадебные песни, птицы, животные, символическое значение.*

***Аннотаци***: статьяра чăваш халăхĕн туйпа çыхăннă ĕненĕвĕсене тишкерсе тухнă. Автор Пушкăрт Республикинчи Авăркас районĕн туй сăмахлăхĕнче тĕл пулакан ĕненӳсене çырса кăтартнă.

***Тĕп сăмахсем***: туй сăмахлăхĕ, ĕненӳсем, чăваш халăхĕ, Пушкăрт Республики, Авăркас районĕ

*Работа выполнена при финансовой поддержке РФФИ, проект №19–012–00498/19.*

Чăваш туй юррисем пысăк сăнарлăхпа палăрса тăраççĕ. Юрăсенче ытарлă каларăшсем нумай. Кайăк-кĕшĕк сăнарĕсем халăх ăнлавĕнче [1; 2], туй юррисенче йышлă тĕл пулаççĕ. Вĕсем урлă чăвашсем ытларах хĕрпе качча сăнарланă.

*Ăмăрт кайăк сăнарĕ.*

Эпир кăна мар,

Вĕçсе пыракан *ăмăрт кайăк* та

Хăват хушнипе, пӳлĕх пӳрнипе

Уртăш йывăççи çине ларса канать.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Ку йĕркесем хăта кил картинче каламалли юрăсем шутне кĕреççĕ. Ăмăрт кайăк сăнарĕ кунта каччă сăнарĕпе çыхăнать.

*Ама кайăк, аçа кайăк.*

Çимун *(хĕр ашшĕн ячĕ)* хăта пӳрчĕ тăрринче

*Ама кайăк* авăтать.

Микуç *(каччă ашшĕн ячĕ)* хăта пӳрчĕ тăрринче

*Аçа кайăк* авăтать.

Эпир çав кайăксен вăййипе

Çакăнта тухса килтĕмĕр.

Мĕншĕн авăтаççĕ-ши çав кайăксем?

Ку йĕркесене хăта çуртĕнче калаççĕ. Ама кайăк качча каякан хĕре, аçа кайăк авланакан качча пĕлтерет. Кунта та ытарлă каларăш, метафора палăрать. Ыйту çине туй халăхĕ çапла хуравлать:

Иккĕн пĕрле

Пĕр йăвара пурăнасшăн пуль.

Çак хурав, кайăксем пĕрле йăва çавăрнă пек, çамрăк хĕрпе каччă çемье çавăрасшăн тенине пĕлтерет.

*Акăш сăнарĕ* (юрăсенче çак сăмахăн диалект чĕлхинчи *аккăш* варианчĕ те тĕл пулать).

Хăта килне çитсен юрламалли юрă йĕркисенчи акăш сăнарĕ:

Пĕр пар *акăш* килнĕ иккен,

Кăкăлтатса тăнă иккен.

Эпир килесне пĕлнĕ иккен,

Хирĕç тухса тăнă иккен [3].

Хĕр килĕнче юрланă юрăсенче те акăш сăнарĕ хĕре сăнарлать.

*Аккăш* вĕçрĕ, куртăр-и,

Тĕкĕ ӳкрĕ, илтĕр-и?

Хĕр туй килчĕ, куртăр-и?

Хирĕç тухса илтĕр-и? (1961 ç. Т.Н. Козловăран çырса илнĕ.)

*Хур-кăвакал.*


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Хăйматлăх юррисенче хĕрĕпе кĕрӳшне хур-кăвакал сăнарĕ урлă сăнланă.

Пусма умĕ пуш пулмасса

*Хур-кăвакал* туянтăм.

Кĕреке пушă пулмасса

Хĕрпе кĕрӳ туянтăм.

Ку такмакăн тепĕр варианчĕ те пур.

Пусма ай пушă ларасран

*Хурпа кăвакал* туянтăм.

Кĕреке пушă ларасран

Хĕрпе кĕрӳ туянтăм.

И пус вылять, пус вылять,

Пус кутĕнче *хур* вылять.

Улма чăпар тӳшек çинче

Каччăпала хĕр вылять. (1955 ç. З.Н. Дмитриевăран çырса илнĕ.)

*Сарă кайăк сăнарĕ.*

Сарă кайăк сăнарĕ урлă туй юррисенче качча каякан хĕр сăнарне уçса панă.

*Сарă кайăк* ăçта ларать?

Сарă çеçке çийĕнче.

Пирĕн акка ăçта ларать?

Шур пĕркенчĕк айĕнче.

Туй такмакĕсенче те сар кайăк сăнарĕ анлă сарăлнă:

Калушша илессĕм килет,

Туя каяссăм килет.

Туя кайсан *сар кайăк* пек

Саркаланассăм килет.

Эй, *сар кайăк*, *сар кайăк*,

Саркаланать йăвинче.

Савнă тăван туйĕнче,

Саркаланап умĕнче. (1961 ç. Т.Н. Козловăран çырса илнĕ.)

*Чĕр чун сăнарĕсем.*



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Туй юррисенче чĕр чун сăнарĕсем те йышлă тĕл пулаççĕ. Чи анлă сарăлнă чĕр чун сăнарĕ – лаша е ут. Пĕтĕмĕшле халăх сăмахлăхĕнче лаша сăнарĕ арçынна палăртать, туй юррисенче те ытларах авланакан каччă сăнарлать.

Туй пуçламăшĕн юрринче ут, лаша сăнарĕ темиçе хут тĕл пулать, туй каччине сăнарлать.

Тăват кĕтеслĕ çанталăка
Йĕвенлĕ-йĕнерлĕ *ут* ятăм.
Тăват кĕтеслĕ çанталăкран
Ырлăх-сывлăх ыйтатпăр.
Туй пуç *лаши* – тур *лаша*
Сĕлеме тулли сĕлĕ ыйтать;
Ах, тăванăм Петĕр *(каччă ячĕ)* пур –
Ытам тулли хĕр ыйтать.
Туй халăхĕ хĕр илме кайнă чух юрлакан юрăсенче те ут сăнарĕ пур.
Чăнкăр-чăнкăр чĕн йĕвен
Ыр *ут* пуçне кĕлтăвать.
Ах, тăванăм Тимук *(каччă ячĕ)* пур,
Куллен ырлăх кĕлтăвать. (1957 ç. Г.В. Карповăран çырса илнĕ.)

Хĕр килĕнче юрлакан юрă-такмаксенче лаша мăшăра пĕлтерет.

Ылтăн йĕвен, кĕмĕл йĕнер –
Шур *лашасăр* килĕшмест.
Ах, тăванăм Микула *(каччă ячĕ)* пур –
Тек мăшăрсăр килĕшмест.
Икĕ турă *лашине*
Парлăн туса кӳлтĕмĕр.
Ик ырă çын ачине
Парлăн тума килтĕмĕр.
Пирĕн *лаша лаша*-им,
Ларса ĕлкĕрмелле-им?
Пирĕн тăван тăван-им?


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Курса тăранмалла-им? (1937 ç. Е.М. Львовăран çырса илнĕ.)

Мăн кĕрӳ сăмахĕнче аякран килнине палăртма тискер чĕр чунсен сăнарĕсемпе усă кураççĕ: *пăлан, упа, кашкăр, тилĕ.*

Çеçен хирте – *пăлан* йĕрĕ,
Сĕм вăрманта – *упа* йĕрĕ,
Вăрман хĕрринче – *кашкăр* йĕрĕ,
Тарăн çырмара – *тилĕ* йĕрĕ,
Аслă урамра – хĕр йĕрĕ,
Çавсен йĕрĕпе килтĕмĕр [3].

Кунта чăваш халăхĕн ытарлă каларăшĕ палăрать. Малалла вара саламаликра туй халăхĕ вун икĕ ылтăн мăйракаллă, кĕмĕл чĕрнеллĕ, çут кăлкан пек хӳреллĕ асамлă пăлан çулĕпе килни çинчен калать. Çак пăлан туй халăхĕ валли çул туса пырать иккен.

Мăйракипе шăйăрать те
Тем вăрăмăш йĕр тăвать.
Чĕрнипеле пусать те
Пире кайма çул тăвать,
Хӳри вĕçĕпе шăлса якатать.
Çавăн çулĕпе килтĕмĕр, хăта [3].

Пăлана сăнланă йĕркесенче эпитетсем те, мăнăлату та тĕл пулать. Туй пуçĕ хăйсем пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçпе килнине çапла майпа палăртать.

Пушкăрт Республикинче пурăнакан чăвашсен туй юррисенче кайăк-кĕшĕк, чĕр чун сăнарĕсем йышлă тĕл пулаççĕ. Пурте вĕсем символла пĕлтерĕше палăртаççĕ: хĕре сăнлаканнисем – ама кайăк, акăш, хур, кăвакал, сарă кайăк, чĕкеç, пăлан; авланакан каччă палăртаканнисем – аçа кайăк, ăмăрт кайăк, лаша, ут. Каччăпа хĕр мăшăр пулнине уçса параканисем: акăшсем, хур-кăвакал, пар лаша.

*Информаторсем:*

1. Дмитриева Зинаида Николаевна, 1955 ç., Кăрмăскал районĕ, Йăмран ялĕ.
2. Карпова Галина Владимировна, 1957 ç., Авăркас районĕ, Çĕньял ялĕ.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

3. Козлова Татьяна Николаевна, 1961 ç., Кăрмăскал районĕ, Йăмран ялĕ.

4. Львова Елизавета Максимовна, 1937 ç., Авăркас районĕ, Çĕньял ялĕ.

***Список литературы***

1. Чăваш литератури. 8 класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / В.П. Никитин (Станьял) пухса-çырса хатĕрленĕ. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2003. – 318 с.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)